Шупашкар район хаҫачӗ

# ТӐВАН ЕН

1932 ҫулхи июлӗн 27-мӗшӗнче тухма пуҫланӑ

131 (9574) № ✵ 2008 ҫулхи ноябрӗн (чӳк уйӑхӗн) 12-мӗшӗ. Юн кун ✵ Хакӗ ирӗклӗ

## САККУНСЕМПЕ КИЛӖШӲЛЛӖН ПУЛТӐР

***Паян вырӑнти нормативлӑ документсем йышӑннӑ чухне ял администрацийӗсен вӗсене Раҫҫей саккунӗсемпе килӗштермесӗр май ҫук, унсӑрӑн часах йӑнӑшма пулать.***

Тутаркасси тата Толик Хураски ял тӑрӑхӗсенче шӑпах ҫапла пулса тухнӑ. 2005 ҫулта Толик Хураски, Ҫӑкалӑхьял, Котеркасси, Йӑлӑмкас тата Томаккасси ҫыннисем хӑйсен пухӑвӗсенче ҫак ялсенче прописксӑра тӑман ҫынсене вырӑнти масарта укҫалла пытарма ирӗк панӑ. Ял администрацийӗ 2006 ҫулта пӗр ҫынна пытарма – 1500, 2007 ҫулхи июньтен 3000 тенкӗ илнӗ, документ ҫине спонсор пулӑшӑвӗ пек палӑртнӑ. Тутаркасси ял тӑрӑхӗн администрацийӗ 2006-2007 ҫулсенче пытарма вырӑн панӑшӑн 28 ҫынран 48000 тенкӗ йышӑннӑ.

Маларах Толик Хураски ял администрацийӗ масар ҫинчи вырӑншӑн спонсор пулӑшӑвӗ ҫапла илнӗ: 2003 ҫулта 14 ҫыншӑн – 18000, 2004 ҫулта 37 ҫыншӑн – 45500, 2005 ҫулта 21 ҫыншӑн 31500 тенкӗ.

Вилнӗ ҫынсенчен чылайӑшӗ ҫӳлерех асӑннӑ ялсенче ҫуралса ӳснӗ, вӗсенче ҫуралса ӳсменнисем те пур. Федерацин «Ҫын пытарасси тата юлашки ҫула ӑсатасси ҫинчен» саккунӗ Раҫҫейӗн кашни гражданне хӑй каласа е ҫырса хӑварнӑ масар ҫине пытарассине гарантилет. Вӗсене хӑйсем каласа хӑварнӑ масарсене пытарса асӑннӑ саккунпа килӗшӳллӗн тунӑ темелле. Анчах ял администрацийӗ федерацин «Раҫҫей Федерацийӗнчи муниципалитет службине ҫинчен» саккунӗн 34-мӗш статйине («муниципалитет службине укҫа-тенкӗпе тивӗҫтерсе тӑрасси вырӑнти бюджет укҫинчен пулса пырать» тенӗ унта) пӑснӑ: спонсорсенчен укҫа-тенкӗ пухнӑ.

Ҫак статьяна пӑхӑнман пирки район прокуратурин Тутаркасси ял тӑрӑхӗн администрацине представлени тӑратма тиврӗ, айӑплисене явап тыттарма ыйтрӑмӑр.

Ҫӗньял ял тӑрӑхӗн депутачӗсен Пухӑвӗ кӑҫалхи февральте ҫак ял тӑрӑхӗн пушар службине ҫинчен положени йышӑннӑ. Унӑн 3.1-мӗш пунктӗнче Ҫӗньял ял тӑрӑхӗн пушар службине укҫа-тенкӗпе тивӗҫтересси бюджетри укҫа-тенкӗрен, ҫавӑн пекех Ҫӗньял ял тӑрӑхӗнче вырнаҫнӑ кирек мӗнле предприяти-организаци те хӑйӗн ирӗкӗпе куҫарнӑ укҫаран пулса пырать тенӗ. Федерацин «Раҫҫей Федерацийӗнче вырӑнти хӑй тытӑмлӑх йӗркелессин пӗтӗмӗшле принципӗсем ҫинчен» саккунӗпе килӗшӳллӗн вырӑнти ыйтусене татса панӑ чухне тухса тӑракан укҫа-тенкӗ ыйтӑвӗсене вырӑнти бюджетри укҫаран ҫеҫ татса памаллине уҫӑмлӑ каланӑ (кунсӑр пуҫне федераци тата регион бюджечӗсенчен уйӑрни те саккунлӑ шутланать). Саккунра ял тӑрӑхӗнчи предприяти-организацисем, кирек мӗнле харпӑрлӑхлӑ учрежденисем, уйрӑм ҫынсем хӑйсен ирӗкӗпе вырӑнти финанс ыйтӑвӗсене татса пама укҫа куҫарасси не пӑхман. Район прокуратури Ҫӗньял ял тӑрӑхӗн депутачӗсен Пухӑвӗнчен те ҫӳлерех асӑннӑ положение саккунпа килӗштерме ыйтрӗ. Мӗншӗн тесен кунта илсе кӑтартнӑ тӗслӗхсенче пуринче те коррупци палли пур.

А.МОИСЕЕВ,
район прокурорӗ.

## МИЛИЦИ КУНӖПЕ

Ноябрӗн 10-мӗшӗнче районти шалти ӗҫсен пайӗ (ШӖП) Милици кунне паллӑ турӗ. ШӖП пуҫлӑхӗ В.Михайлов савӑнӑҫлӑ ларура ЧР шалти ӗҫсен министрӗн В.Антоновӑн Милици кунӗпе коллектива янӑ саламлӑ ҫырӑвне вуласа пачӗ. Район прокурорӗ А.Моисеев юлашки икӗ ҫул хушшинче ШӖП хӑйӗн умне лартнӑ



***ШӖП пуҫлӑхӗ В.Михайлов Ю.Мустаевана милицин чертлӗ званипе саламлать.***

тӗллевсене ӑнӑҫлӑ пурнӑҫласа пынине, милици ветеранӗсен канашӗн председателӗ Н.Михайлов сотрудниксем хӑйсен тивӗҫне тӳрӗ кӑмӑлпа пурнӑҫланине палӑртрӗҫ. Сӑмахран, уголовнӑй шыравӑн аслӑ оперуполномоченнӑйне А.Удалова преступник ҫӗҫӗпе чиксе амантнӑ, анчах Александр Николаевич телефонпа шалти ӗҫсен пайне шӑнкӑравлама вӑй ҫитерет. Кӗҫех унтан пулӑшу ҫитет, преступнике арестлеҫҫӗ. ШӖП пуҫлӑхӗ пулнӑ В.Пешков пай кӑтартӑвӗсем аван пулнине каларӗ. Сотрудниксен пӗр пайне милицин чертлӗ ячӗсем тата укҫан премии пани ҫинчен кӑларнӑ хушупа савӑнтарчӗҫ.

Ю.МИХАЙЛОВ.

## ШАНЧӐКЛӐ ПУЛНИШӖН

***«Эп пуху ирттерӗҫҫӗ тесе шутларӑм. Эй, лайӑх мар кун пек. Кӑна пӗлнӗ пулсан хамӑн чечек илсе килмеллеччӗ», – хытах аванмарланчӗ Ҫӗнӗ Тутаркассинчи Е.И.Андреева эрне кун Перекет банкӗн районти уйрӑмӗнче хӑйне чечек ҫыххипе кӗтсе илнине кура.***

Чӑнах та, нимӗнле пуху та пулмарӗ. Кредит учрежденийӗ хӑйӗн ноябрӗн 12-мӗшӗнчи юбилейӗ тӗлне «Банкпа шанчӑклӑ ҫыхӑну тытнӑшӑн» акци иртерчӗ. Банкшӑн ҫӗнӗ мероприяти мар-ха вӑл. 160 ҫулхи юбилей тӗлне йӗркелеме пуҫланӑ та – тытса пыраҫҫӗ. Кунсӑр пуҫне тата ноябрӗн 18-мӗшӗнче пенсионерсен перекет кӗнекисен лотерея вылявне иртерӗҫ. Унта кӑмӑл тӑвакан пур пенсионера та чӗнеҫҫӗ, концерт та пулӗ.

Евгения Ильинична пирки каласан, Перекет банкӗ кӳрекен тӗрлӗ пулӑшупа 36 ҫул ӗнтӗ усӑ курать. Ҫавӑнпа ӑна чыслас тенӗ те банк уйрӑмӗн канашӗ. Малалла та ҫыхӑну тытма ырӑ сунса саламланӑ май Евгения Ильиничнӑна укҫан хавхалантарчӗҫ. Унтан ӑна сӗтел хушшине чӗнсе тутлӑ кукӑльпе тата чейпе хӑналарӗҫ.

В.ТИТОВА.



***Банк ӗҫченӗсем Е.И.Андреевана (сылтӑмри) саламланӑ самант.***

## ВӐЙЛӐ СУТӐННӐ

***Иртнӗ шӑмат кун районти культура ҫуртӗ умӗнчи лапамра «Кӗр парни» ярмаркки-суту иртрӗ. Унта ялта туса илекен тӗрлӗ продукцие йӳнӗрех хакпа туянма май килчӗ.***

Ял хуҫалӑх предприятийӗсенчен Ленин ячӗллӗ кооператив нумай ҫул ӳсекен курӑк вӑрлӑхӗ, фураж тата вӗтетнӗ тырӑ сутнӑ. Пӗр килограмм люцернӑшӑн вӑл 150 тенкӗ ыйтнӑ, ӳхлӗм курӑкӗшӗн – 80 тенкӗ, клевершӑн – 70 тенкӗ, фуражшӑн – 7 тенкӗ, вӗтетнӗ тырӑшӑн – 10 тенкӗ. Куйбышев ячӗллӗ кооператив улӑм сутма пынӑ. «Атлашевский» – тӗрлӗ пахча-ҫимӗҫ: кишӗр, хӗрлӗ кӑшман, ҫӗр улми, купӑста. Чӑрӑшкасси ял тӑрӑхӗнчи «Волгарь» тата Ҫӗньял ял тӑрӑхӗнчи В.Петров фермер хуҫалӑхӗсем те пахча-ҫимӗҫпе ҫитнӗ. Уйрӑм хушма хуҫалӑх тытакансенчен Тутаркасси ял тӑрӑхӗнчи Х.Макаров пыл тата пыл продукцӗ, улма-ҫырла, пахча-ҫимӗҫ сӗннӗ.

«Вӑйлӑ туянчӗҫ, – терӗ район администрацийӗн ял хуҫалӑх пайӗн пуҫлӑхӗн ҫумӗ С.Мясникова. – Фермерсем продукцие икӗ хут та турттарса килчӗҫ». Ярмӑркка-суту пынӑ вӑхӑтрах районти пултарулӑх ушкӑнӗсем халӑха концертпа савӑнтарнӑ.

В.ЭВЕРККИ.

Ҫӗньял-Покровски тӑрӑхӗнче

## ПӖВЕНЕ ЮСАНӐ

Пархикасси пӗвине юсаса пӗтернӗ. Ҫак ӗҫе ял ҫыннисем ыйтнипе пурнӑҫланӑ. 2007 ҫулта республикӑн экономика ӑмӑртӑвӗнче лайӑх кӑтартупа палӑрнӑшӑн Ҫӗньял-Покровски ял тӑрӑхӗн администрацине 600 пин тенкӗ уйӑрнӑ укҫаран 204 пинӗ ҫав пӗвене юсама кайнӑ.

С.СЕРЕГИН.

## ӖҪКЕ ХИРӖҪ

Пархикассинчи тӗслӗхлӗ библиотекӑра 8-10-мӗш классенче вӗренекенсемпе тӗл пулу иртернӗ. В.Иванова тата Н.Сармосова фельдшерсем, милицин Ҫӗньял-Покровски участокӗн уполномоченнӑйӗ А.Рябов вӗсене ӗҫкӗ-ҫикӗпе иртӗхни, табак туртни, наркоманипе ҫыхланса кайни мӗн патне илсе ҫитернине каласа кӑтартнӑ.

В.НИКОЛАЕВ.

## ДИАБЕТПА – УҪӐ АЛӐК КУНӖ

***Пӗтӗм тӗнчери диабет кунне халалласа ноябрӗн 14-мӗшӗнче районти тӗп больницӑра Уҫӑ алӑксен кунӗ иртет. Кӑмӑл тӑвакансене эндокринолог ирхи саккӑртан пуҫласа йышӑнать, лаборатори анализӗсем те тутарма пулать.***

Диабета пула ытларах чух куҫ, пӳре, чӗре тымарӗсем, ура, нерв тытӑмӗ сиенленеҫҫӗ. Ку чир сахал хускалсан, нумай ҫисе ҫавна пула самӑрӑлсан, ҫавӑн пекех хытӑ кулянсан лекме пултарать. Йӑхран йӑха та куҫать вӑл. Сахӑр диабечӗпе чирлес мар тесен ҫӳлерех асӑннӑ самантсене шута илмелле, диетӑна пӑхӑнмалла, физкультурӑпа туслӑ пулмалла, эрех ӗҫмелле е туртмалла мар, кунсӑр пуҫне врач патӗнче ҫулсерен тӗрӗсленмелле.

И.НИКОЛАЕВА,
районти тӗп больницӑн эндокринологӗ.

**ХИСЕПЛӖ ВУЛАКАНСЕМ!**

**«Тӑван ен» хаҫата ҫырӑнтарасси малалла пырать, хаксене палӑртнӑ. Хаҫата почта уйрӑмӗсемпе почтальонсем патӗнче ҫырӑнма пулать, вӗсем патӗнче вӑл 187,20 тенкӗ тӑрать. Альтернативлӑ майпа йӳнӗрех – редакцире.**

**Синоптиксем пӗлтернӗ тӑрӑх**

***Юн кун, ноябрӗн 12-мӗшӗ***
уйӑхӑнса тӑракан пӗлӗтлӗ ҫанталӑк,
кӑнтӑрла +3
ҫӗрле +1

***Кӗҫнерни кун, ноябрӗн 13-мӗшӗ***
уйӑхӑнса тӑракан пӗлӗтлӗ ҫанталӑк,
кӑнтӑрла +5
ҫӗрле -1

***Эрне кун, ноябрӗн 14-мӗшӗ***
уяр,
кӑнтӑрла +3
ҫӗрле -2

***Шӑмат кун, ноябрӗн 15-мӗшӗ***
уйӑхӑнса тӑракан пӗлӗтлӗ ҫанталӑк,
кӑнтӑрла +2
ҫӗрле -2

Ял хуçалăхĕ

# СĔТ ТАТА ÇĂМАРТА ТУСА ИЛЕССИПЕ ЫТЛАРАХ ĔÇЛЕМЕЛЛЕ

***Ял хуçалăхĕнчи тĕп отрасльсенчен пĕри – выльăх-чĕрлĕх ĕрчетесси. Ăна хăйне икĕ пая уйăрма пулать: ашпăш туса илесси тата сĕт сăвасси. Мĕнпур категориллĕ хуçалăхсемпе (кунта предприятисем кăна мар, фермерсемпе уйрăм хушма хуçалăх тытакансем те кĕреççĕ) пăхсан, какай туса илесси кăçалхи тăхăр уйăхра пĕлтĕрхи январь-сентябрь уйăхĕсенчинчен 16 процент лайăхланса 17 пин тоннăпа танлашнă. Ял хуçалăх предприятийĕсенчи лару-тăрăва тишкерес тĕллев лартнă май, унти тăрăм пирки ытларах чарăнса тăрасшăн.***

Ял хуçалăх предприятиĕсем пурĕ 14,2 пин тонна какай илнĕ. Лайăх-и, вăл е сахал-и? Иртнĕ çулхи танлаштаруллă тапхăрпа пăхсан, аван: ӳсĕм – 18 процент. Чылай хуçалăхра сысна йышне чакарнине тĕпе хурсан, какай илеслĕх «нăрик-нăриксене» пула самаййăн курăнмасть-и тесе асăннă выльăх ашне миçе тонна илнине пăхатăп: 386 тонна. Ку вăл пĕлтĕрхин 90 проценчĕ кăна. Ĕне-выльăх ашĕ илесси 62,9 тонна чакнă, 614,2 тоннăпа танлашнă.

Кайăк-кĕшĕкçĕсем вара ăнăçлă ĕçленĕ. Вĕсен ӳсĕмĕ – 20 процент. Районти виçĕ кайăк-кĕшĕк фабрики: «Чăваш бройлерĕ», «Шупашкар бройлерĕ» тата «Шупашкар кайăк-кĕшĕк фабрики» 13,2 пин тонна какай илнĕ. Уйрăм предприятисенчен «Чăваш бройлерĕ» яланхиллех аван ĕçленĕ, унта 5,9 пин тонна туса илнĕ. Унти кайăк-кĕшĕк талăксерен 49,2 грамм ӳт хушнă. Сергей Антоновпа Вячеслв Баранов кайăк-кĕшĕк пăхакансен çав кăтартăвĕ вара – 54,5 грамм. Какай илессине пĕлтĕрхи танлаштаруллă тапхăртинчен «Шупашкар бройлерĕ» 1,4 хут ӳстернĕ. Вăл хăйĕн проект хăвачĕ çине тухса пырать. «Шупашкар кайăк-кĕшĕк фабрики» обществăри чĕп ӳстерекен цех та продукци кăларма пуçланă.

Аш-какай туса илессипе ытти предприятисенчен «Приволжское», Ленин ячĕллĕ хуçалăхсем малта пыраççĕ. Кăрмăшсем 253 тонна какай илнĕ, 100 гектар ял хуçалăх çĕрĕ пуçне вăл 112,2 центнер ларать. Апашра вара – 227 тонна, 100 гектар ял хуçалăх çĕрĕ пуçне – 89,4 центнер.

Çамрăк ĕне-выльăх самăртакансем январь-сентябрь уйăхĕсене районĕпе вăтамран 434 грампа, сысна ӳстерекенсем 356 грампа вĕçленĕ. Ленин ячĕллĕ хуçалхăра ĕçлекен Тамара Федоровапа Лидия Макарова пăру пăхакансем çулран çул лайăх ĕçлесе пыраççĕ. Кăçал та вĕсен ушкăнĕнчи вăкăрсем талăксерен 800 грамм ытла ӳт хушнă. Сысна пăхакансенчен «Приволжское» учхозри Вера Павлова лайăх ĕçленĕ: вăл 172 тонна какай илнĕ, унăн сыснисем талăксерен 753 грамм ӳт хушнă.



*«Чăваш бройлерĕ» АУО – ăнăçлă ĕçлекен ял хуçалăх предприятийĕсенчен пĕри. 2007 çулхи фото ӳкерчĕк.*

Сĕт сăвасси мĕнпур категориллĕ хуçалăхра 4 процент хушăннă-ха, анчах ял хуçалăх предприятийĕсенче 10 процент чакнă, 7937 тоннăпа танлашнă. Сĕт туса илессине «Чурачикское», Ленин ячĕллĕ, «Искра», «Слава», «Атăл», «Прогресс» хуçалăхсем ӳстернĕ. Учхозри Валентина Яландаева пĕтĕмпе 235 тонна суса илнĕ, кашни ĕнерен вара вăтамран – 4520 килограмм. Çав предприятири Светлана Карпова 216 тонна сунă, кашни ĕнерен – 4008 килограмм.

Выльăх-чĕрлĕх отраслĕ пирки калаçнă май, кайăк-кĕшĕк патне таврăнса вĕсен ĕçне кăтартса паракан тепĕр цифра илсе парар. Шел те, анчах çăмарта илесси кăçал 55 процент сахалланнă, фабрикăсенче пурĕ 57,5 миллион штук илнĕ. Çакăн тĕп сăлтавĕ – хĕллехи тапхăрта фураж енчен йывăрлăх сиксе тухни.

Выльăх-чĕрлĕх ĕрчетекенсен çапла вара сĕт сăвассипе тата çăмарта илессипе ытларах ĕçлемелли палăрать.

В.ЭВЕРККИ.

# КĂЛТĂКĔ – ТАСАЛĂХ ТĔЛĔШПЕ

***Тыр-пула вырса илсе пӳлмене хунипех агрономсен ĕç вĕçленмест-ха. Ытти çулсенчи пекех, аламалли кăçал та пур. Ноябрĕн 1-мĕшĕ тĕлне хăш-пĕр хуçалăх вăрлăха «Россельхозцентр» учрежденин районти пайне тĕрĕслеттерме те тăратман. Çуртрисемпе ăçта мĕнлерех лару-тăру пулнине çак таблица (цифрăсем – центнерпа) кăтартса парать.***

| Хуçалăхсем | Планпа хурса хăвармалла | Тĕрĕсленĕ | Кондициллĕ | Кондицие ларман |
|---|---|---|---|---|
| Ленин ячĕллĕ | 3600 | 840 | 550 | 290 |
| Свердлов ячĕллĕ | 2200 | 2683 | 804 | 1879 |
| Куйбышев ячĕллĕ | 1600 | 1722 | 1722 | ––– |
| «Пучах» | 800 | 2277 | ––– | 2277 |
| «Искра» | 1300 | 1321 | ––– | 1321 |
| «Туруновский» | 300 | 700 | 442 | 258 |
| «Атăл» | 1600 | 600 | ––– | 600 |
| Кадыков ячĕллĕ | 1000 | ––– | ––– | ––– |
| «Атлашевский» | 3600 | 2375 | 491 | 1884 |
| «Дружба» | 1000 | 514 | ––– | 514 |
| «Агарикус» | 1200 | 2400 | ––– | 2400 |
| «Ольдеевская» | 1700 | 1200 | 600 | 600 |
| «Прогресс» | 1600 | 900 | ––– | 900 |
| «Приволжское» | 5600 | ––– | ––– | ––– |
| **Районĕпе** | **32900** | **17532** | **4609** | **12923** |

Планĕ те паллă мар хуçалăхсене кунта асăнмарăмăр. Районĕпе 12,9 пин центнер вăрлăх кондицие ларман сăлтавĕ – тасалăх тĕлĕшĕнче тивĕçтерменни. Уйрăм хуçалăхсенче те кашнинчех çавăн пек лару-тăру. Ноябрĕн 1-мĕшĕ тĕлне тĕрĕслеттернисенчен Куйбышев ячĕллĕ кооперативăн кăна йăлтах кондициллĕ. «Туруновский» тата «Атăл» предприятисенче шăтасслăхпа кондицие ларман партисем те пур.

В.ТИТОВА
хатĕрленĕ.

# УÇНĂРАНПА – 15 ÇУЛ

Ишекри ветерансен çурчĕ 15 çул тултарнă. Ăна уçма Ишек ял совечĕн председателĕ пулнă Г.С.Смирнов, собес заведующийĕнче тăрăшнă И.П.Павлов тӳрремĕнех хутшăннă. Вĕсем савăнăçлă ларура çурта мĕнле туса лартнине аса илнĕ, район халăхне социаллă хӳтлĕх кӳрекен центр ертӳçи Л.В.Ананьева тата район халăхне социаллă пулăшу паракан пай пуçлăхĕ А.А.Константинов пенсионерсен паянхи пурнăçĕпе çыхăннă ыйтăвĕсем çинче чарăнса тăнă, вĕсене хуравланă. Çурта уçнăранпах заведующи пулса М.С.Илларионова ертсе пырать, кунта паян 11 çын пурăнать, выльăх тытаççĕ, пахча çимĕç çитĕнтереççĕ, кунне 3 хут апатлантараççĕ.

С.СЕРЕГИН.

# ÇУРАЛНĂ КУНĔСЕМ

Ял тăрăхĕсен администрацийĕсен сайчĕсене уçса пăхса хăш-пĕр ял администрацийĕнче ĕçлекенсен, вырăнти депутатсен çуралнă кунĕсене пĕлме май килет. Акă, ноябрĕн 6-мĕшĕнче Анаткассинче çуралнă, Мăн Мамăшра пурăнакан, Янăш ял тăрăхĕн депутачĕ Н.В.Иванов фермер хăйĕн 65 çулне паллă тунă. Вăл 8 çыннăн пай çĕрне пурĕ 21 гектар ытла арендăна илнĕ, ял хуçалăх культурисем çитĕнтерет. Ноябрĕн 24-мĕшĕнче Атайкасси ял тăрăхĕн пуçлăхĕ А.С.Щукин – 35, ноябрĕн 12-мĕшĕнче район халăхне социаллă пулăшу паракан пайăн аслă специалисчĕ Р.П.Самсонов – 60, ноябрĕн 17-мĕшĕнче Çĕньял тăрăхĕн администрацийĕн пуçлăхĕ Е.А. Зубков – 53, ноябрĕн 27-мĕшĕнче Янашкассинчи Фольклор çурчĕн директорĕ Л.В.Васильева – 45, ноябрĕн 15-мĕшĕнче Шĕнерпуç ял тăрăхĕн администрацийĕн специалисчĕ Г.А.Поцелуева 49 çул тултарать.

В.НИКОЛАЕВ.

Пуласлăх

# УСĂ КУРМА ПУЛАТЬ

Ноябрĕн 7-мĕшĕнче Чăваш наци музейĕн конференц-залĕнче «Шупашкар хулин тата Шупашкар агломерацийĕн аталанăвĕ – çĕнĕ майсем, чăрмавсем тата пуласлăх» ятпа конференци иртрĕ. Унта ЧР Министрсен Кабинечĕн Председателĕн çумĕ – ял хуçалăх министрĕ Михаил Игнатьев хутшăнчĕ. Конференцие килнĕ 100 ытла çын Шупашкар, Çĕнĕ Шупашкар хулисенчи, Муркаш, Сĕнтĕрвăрри, Шупашкар тата Çĕрпӳ районĕсенчи политикăн, ĕçлĕ çынсен тата экспертсен пĕрлехи коммуникативлă площадкине туса хурассипе çыхăннă ыйтăва сӳтсе яврĕç. Тĕп хула агломерацийĕн пуласлăхне тата унăн аталану стратегине шута илсе ăна туса хатĕрлес ĕçе çав площадкăна та явăçтарма палăртаççĕ. Раççей Федерацийĕн Обществăлла палатин регионсен аталанăвĕн комиссийĕн председателĕ В.Глазычев ертсе килнĕ экспертсем, «Ленгипрогор» институт представителĕсем агломераци аталанăвĕн çул-йĕрне, Шупашкара аталантарас енĕпе чи малтанах пурнăçламалли ĕçсене сӳтсе яврĕç. Çак конференци яллă территорисене – Муркаш, Сĕнтĕрвăрри, Шупашкар тата Çĕрпӳ районĕсене – аталантарассипе çыхăннă ыйтусене пырса тивнипе пысăк пĕлтерĕшлĕ.

ЧР ЯЛ ХУÇАЛĂХ
МИНИСТЕРСТВИ.

*ПИРĔН КОММЕНТАРИ*

Совет тапхăрĕнче колхозсемпе совхозсене хуларан шефсем – предприятирен командировкăна янă çынсем – килсе çĕр улми, пахча çимĕç пухса кĕртме пулăшатчĕç. Аванччĕ. Пуянрах предприятисем хуçалăхсене укçа-тенкĕ уйăрса та пулăшнă. 1990-мĕш çулсенче шефсем яла килсе çӳреми пулчĕç.

Реформăсен тапхăрĕнче хуларан ял еннелле пăхакан инвесторсем тупăнсан картишĕнче ылтăн катăкĕ тупнă пек савăнтăмăр. Хăш-пĕрисем районта производство йĕркелесе ячĕç, продукци туса кăлараççĕ, вырăнти бюджета пуянлатаççĕ, çавна май ял çыннисем валли ĕç пур – çакă вăл пирĕн аталану çулĕсенчен пĕри. Йышăнас пулать, хальлĕхе инвесторсем пирĕн кашни хуçалăха килсе производство пуçласа яма пулăшрĕç тесе калаймастăр, çавăнпа вырăнти экономикăпа социаллă пурнăçа çулсерен ӳсĕм паракан программăпа аталантарассине куç умне кăларса тăратма йывăр.

Çапла, хулана малалла аталантарма, çĕнĕ производство йĕркелеме ăна çĕр те кирлĕ. Анчах пуринчен ытла кунта пирĕншĕн Шупашкар хулипе районне пырса тивекен ыйтусене татса парсан лайăх. Сăмахран, районсенчи çĕр лаптăкĕсене гектарĕ-гектарĕпе хулара пурăнакансем тытса тăраççĕ – дача-сад юлташлăхсене, çавăнпа районăн чăрмавĕ самаях: каяшĕнчен пуçласа преступнăç таранах. Агломераци тени вăл администраци енчен пире чăрмантармалла мар, чи малтан çав ыйтусене татса памалла. Паллах, хуласенчен çĕнĕ инвесторсем килсе предприятисем, социаллă пурнăçпа культура объекчĕсем хута яни район халăхĕшĕн усса çеç каймалла. Анчах ку вăл хальлĕхе идея шайĕнче çеç-ха.

Ю.МИХАЙЛОВ.

# КĔСЬЕНЕ ПУШАТТАРАТЬ

Район прокуратури ыйтнипе хаçат вулаканĕсене ***этем сывлăхĕшĕн хăрушлăх кăларса тăракан спирт хутăшĕ тунăшăн, упранăшăн тата сутнăшăн*** уголовнăй йĕркепе явап тыттарни çинчен «Тăван ен» урлă пĕлтерсе тăма май килет. Октябрĕн 14-мĕшĕнче район сучĕ Платкари Г.О. Соколована (1958 ç.ç.) хирĕç пуçарнă уголовнăй ĕçе пăхрĕ. Ăна çур литр спирт хутăшне 30 тенкĕпе сутнă чухне аллинчен ярса тытнă. Вăл судра хăйĕн айăпне йышăнчĕ. Ларăва патшалăх енчен айăплакан пулса хутшăннă район прокурорĕ А.Д.Моисеев Соколова 238-мĕш статьяра пăхнă преступлени тунă тесе йышăнма, ăна пысăк штраф пама ыйтрĕ. Судья Галина Соколова асăннă статьяпа пăхнă преступлени тунă тесе йышăнчĕ, ăна 7 пин тенкĕ тӳлеттермелле турĕ.

А.ИВАНОВ,
район прокурорĕн çумĕ.

# ТĂВАН ТАВРАЛĂХ

## ТИМЛĔХ ТĂВАН ТАВРАЛĂХА ТА ПИТĔ КИРЛĔ

***Иртнĕ ĕмĕрте Раççейĕпе пурĕ 80 миллиард ытла тонна çӳп-çап пуçтарăннă. Çакăн пек цифра тупса вуларăм Интернетра. Чăнах та, тăван тавралăх тăрăмĕ пурне те шухăшлаттарма тивĕç. Кашни çын хăй енчен пĕр пĕчĕк те пулин ырă ĕç тунинчен пуçласа çӳлти шайра татса памалли ыйтусем таранах пур. Пирĕн районсене мĕнлерех ыйтусем ытларах канăçсăрлантараççĕ-ха? Кун пирки «Районăн экологи хăрушсăрлăхĕн комитечĕ» учрежденин пуçлăхĕпе Р.В.ДАНИЛОВПА калаçрăмăр.***

***– Ростислав Васильевич, тасамарлăх самай тухать-и пирĕн районта?***

– Иртнĕ çул атмосферăна 5 пине яхăн тонна сиенлĕ япала тухнă. Кунта асфальтпа бетон завочĕсем, кайăк-кĕшĕк фабрикисем, çĕр кăмрăкĕпе ĕçлекен котельнăйсем, Шупашкарпа Çĕнĕ Шупашкар хулисенчи предприятисем те пысăк витĕм кӳреççĕ.

Шыв объекчĕсене илсен те ыйту çук мар. Лайăх тасатмасăр е пачах тасатмасăр юхан шыва, пĕвекӳлĕне лекет шĕвек каяш. Иртнĕ çулпа илсен, лайăх тасатман шыв 1,5 миллион кубла метра яхăн юхса тухнă.

***– Тасатмалли сооружени терĕр те, вĕсен тăрăмĕ еплерех? Çав объектсене хăш-пĕр çĕрте юсанине пĕлетпĕр.***

– Чылай сооружени кивелсе çитнĕ, теприсем нагрузка пĕчĕккине пула хăйсен хăвачĕпе йĕркеллĕ ĕçлеймеççĕ. Кӳкеçри, Тутаркассинчи сооруженисене юсанă. Кун пек ĕç Çĕньялта, Кăшавăшра, Апашра пырать.

***– Йăла юлашкине вырнаçтарассипе татса памалли хăш-пĕр самантсем пур.***

– Тăван тавралăха уйрăмах сиенлĕ витĕм кӳрекеннисенчен пĕри вăл – шăпах йăла каяшĕ. Уйрăм çынсен йăла юлашкийĕ кăна мар, предприятисен те нумай вăл. Çулталăкне районĕпе 8 пин тонна ытла пуçтарăнать. Çав шутран çуррине яхăн çеç Илпешри çӳп-çап вырăнне çитет. Ытти вара ирĕк паман вырăнсенче выртать. Илпеш свалки те çут çанталăка сыхлас требованисене тивĕçтерсе пĕтермест.

***– Плотинасем пирки те каласа хăварăр-ха кăштах. Вĕсен тăрăмĕ йĕркеллех-и?***

– Пĕтĕмпе районĕпе 48 гидротехника сооруженийĕ. Вĕсен шутĕнче пĕр миллион кубла метр калăпăшлисем икĕ плотина, пĕр миллион кубла метртан пуçласа 500 пин кубла метр таранннисем – 8, 500-тен 300 кубла метр таранлисем – 16, ыттисем пĕчĕкрех.

Гидротехника сооруженийĕсенчен чылайăшĕн служба вăхăчĕ – 25 çул. Плотинасенчен 80 процентĕн ĕмĕрĕ çав вăхăтран иртнĕ. Тепĕр майлă каласан, вĕсем хăрушлăхсăр мар, татса каясран хăрамалла. Апла вĕсене юсамалла.

***– Йывăç лартас кампание районта çулсеренех йĕркелеççĕ...***

– Паян эпĕ цифрăсем çинче чарăнса тăрасшăн мар, ку вăл питĕ кирлĕ мероприяти пулнине кăна палăртам. Экологи ыйтăвĕ çивĕчленнĕ, тăпрапа юхан шывсем, сывлăш вараланнă, шăв-шав нумайланнă май йывăç-тĕм лартни тăрăма лайăхлатмалли мелсенчен пĕри.

***– Ростислав Васильевич, нумаях пулмасть иртнĕ Районти депутатсен пухăвĕнче «Шупашкар районĕнче 2008-2011 çулсенче экологи хăрушсăрлăхне ӳстересси» тĕллевлĕ программа йышăннăччĕ. Унăн тĕллевĕсем пирки кăштах чарăнса тăрар-ха.***

– Вăл программа анлă. Унта чылай мероприятие палăртса хăварнă: котельнăйсене газпа ĕçлеттерме куçарса пĕтересси, ятарлă çӳп-çап вырăнĕсене хăтлăх кĕртесси, усă курма вăхăчĕ иртнĕ пестицидсемпе им-çамсене утилизацилесси... Экологи культурине ӳстересси те пур унта. Программăна пурнăçлама 33,265 миллион тенкĕ тухса кайĕ. Лайăх программа, вăхăтлă та, вырăнлă та.




***Районăн тĕп экологĕ Р.В.Данилов ĕçтешĕсемпе пĕрле йывăç лартать.***

**Ыйту - хурав**

## ПĔВЕ ТĂВАСЧĔ

***Манăн шăллăмăн çĕр участокĕ çинче шыв тарăн мар. Çавна кура унта вăл пĕве туса пулă ĕрчетесшĕн. Анчах çапла хăтланни саккунлăх-ши тата налук тӳлемелле мар-и уншăн?***

Н.ИЛЬИНА.

*Кун пек ыйтăвăн хуравне республикăн Çут çанталăк ресурсĕсен тата экологи министерствин сайтĕнче тупрăмăр. Унта кун пирки çапларах ăнлантарса панă:*

– Çĕр участокĕ сирĕн харпăрлăхăрта пулсан унпа эсир хăвăр пĕлнĕ пек усă курма пултаратăр. Кун пирки РФ Шыв кодексĕн 8-мĕш статйинче каланă. Çĕр лаптăкĕ патшалăх е муниципалитет харпăрлăхĕнче чухне çĕре илме е арендăна пама ыйтса патшалăх влаçĕн е вырăнти хăй тытăмлăхăн органне заявленипе тухмалла. Асăннă участока мĕнле тĕллевпе усă курассине те палăртмалла.

Пĕве таса пултăр тесен экологи, санитарипе гигиена требованийĕсене ытти норматива пăхăнмалла. Шыв объекчĕ сирĕн харпăрлăхăрта пулсан эсир ирĕк памасăр унпа никамăн та усă курма юрамасть.

Тĕрлĕ тӳлев пирки каласан, çĕр налукĕ тӳлемелле. Çĕре арендăна илсен – аренда укçи.

## ХУНАВ ХĔЛ КАÇАТЬ

***Патăрьеле кайсах тĕрлĕ çырла хунавĕ туянтăм. Анчах тепĕр çынсем çуркунне те лартма юрать теççĕ. Пĕлсех калаçаççĕ-ши? Çуркуннеччен хунава епле упрăн-ха?***

П.ФЕДОРОВ.

Чăнах та, упрама пулать иккен. Хунава тăпра айĕнче хĕл каçармалла. 50-60 сантиметр тăршшĕ, 30-35 сантиметр тарăнăш шăтăк алтăр. Ĕçе хĕвел анăçĕнчен хĕвел тухăç енне пурнăçлама сĕнеççĕ. Хунав лайăх вырттăр тесе шăтăкăн кăнтăр енне 45 градуспа чалăш чавăр. Хунавăн тураттине кăнтăр енне хурăр. Кайран тăпра витсе тăпрана таптаса лайăх пусăрăнтарăр. Çуркунне чавса кăларас умĕн çумăр пулман тата çĕр типĕ пулсан хунава шăвармалла.

## ЭТЕМЛĔХЕ ПĔР ПЛАНЕТА ÇИТМЕСТ-МĔН

Çут çанталăк ресурсĕсемпе этемлĕх питĕ вăйлă усă курнине пула экотытăм çĕнелсе ĕлкĕреймест иккен. Çут çанталăкăн пĕтĕм тĕнчери фончĕ, Лондонри зоологи обществи тата «Global Footprint Network» организаци «Чĕрĕ планета» журнал валли хатĕрленĕ докладра шăпах çавăн пирки палăртнă та. Çут çанталăк ресурсĕпе усă курасси экотытăм тивĕçтерме пултарнинчен 30 процент пысăкраххине шута илсе экологсем 2030 çул тĕлне этемлĕхе тепĕр планета кирлĕ пулать тесе шутлаççĕ. Сăмах май, çулталăк каялла пичетленĕ докладра условнăй çав чикĕне 2050 çул тесе палăртнă пулнă.

Çĕр çинчи халăхăн виççĕ-тăваттăмĕш пайĕ пурăнакан регионсенче лару-тăру уйрăмах йывăр. Çут çанталăка вăйлă сиен кӳрекен çĕршывсен шутĕнче чи малтан Америкăри Пĕрлешӳллĕ Штатсене тата Китая палăртаççĕ. Вĕсем çут çанталăка пĕтĕм тĕнчипе сиен кӳнинче 40 процент таран йышăнаççĕ.

Çĕр çинче пурăнакан пĕр çын вăтамран 2,7 гектарлаптăк çĕрпе усă курать (апат-çимĕç, çи-пуç, йăла юлашкине тирпейлеме). Британец вара – 5,3 гектарпа. Çӳлерех асăннă фонд пуçлăхĕ Эмека Аньяоку хальхи вăхăтри финанс кризисĕ экологи енĕпе сиксе тухакан çивĕч ыйтусемпе танлаштарсан ним те мар тесе шухăшлать. Юлашки вăхăтра пирĕн çĕр çинче ӳсен-тăранпа чĕр чун вăтамран 30 процент сахалланнă, тропик çĕршывĕсенче вăл цифра тата пысăкрах: 51 процент таран.

## ХИМЭЛЕМЕНТСЕН ШУЧĔПЕ

Пĕтĕмпех республика территорийĕнче вырнаçнă шыв объекчĕсенчи шыва тĕрĕслени пахалăх кăçал чылай çĕрте малтанхиллех пулнине палăртнă. Хăш-пĕр юхан шывра марганец, тимĕр, алюмини енчен пахалăх лайăхланни те сисĕнет-мĕн. Кун пеккисен шутĕнче пирĕн район территорийĕнчи Йăршăва асăннă. Асăннă химэлементсен шучĕпе Çавал шывĕн пырĕнче те тăрăм аваланнă.

## 1500 ЙЫВĂÇ ЛАРТНĂ

***Çанталăк кĕр енне сулăнсан Шорккасем кашни çулах йывăç лартма тухаççĕ. Владислав Платонов ертсе пынипе кăçал та Мăн çăл (халăхра çапла калаççĕ вăл вырăна) патне аннă çĕрте, клуб еннелле кайнă çула хурăнтан аллея турĕç. Шорккаран Колешша енне каякан çул хĕррине чăрăш лартрĕç.***

Владислав Платонов лайăх ĕçленисене мухтарĕ. Валерий Филиппов, Владимир Фомиряков, Светлана Толстова, Людмила Платонова уйрăмах тăрăшрĕç. Çамрăксемпе пĕрле тивĕçлĕ канурисем те хаваслансах ĕçлерĕç: Вениамин Семенов, Георгий Вишнев, Верăпа Валерий Виноградовсем, Римма Платонова. Йывăç хунавне вăрмантан Александр Платонов хăйĕн УАЗĕпе тата Маргарита Прокопьева тракторпа турттарса тăчĕç.

Çамрăк хунава вылăх тапăнасран карта тытса çавăрчĕç. Пĕтĕмпе Шорккасем 1500 йывăç лартрĕç.

Н.ПЛАТОНОВ, район депутачĕ.

## СИЕНÇĔСЕНЕ ХИРĔÇ

Ял хуçалăхĕнче çеç мар, вăрман отраслĕнче те сиенлĕ хурт-кăпшанкăпа кĕрешмесĕр май килмест. Иртнĕ уйăхăн пуçламăшĕ тĕлне Чăваш Енри вăрмансене пĕтĕмпе 29,4 пин гектар çинче сăтăрçăсемпе чир-чĕр тапăннă-мĕн. Ку вăл мĕнпур лаптăкăн 4,9 проценчĕ пулать. 17,9 пин гектарĕ çинче тивĕçлĕ мерăсем йышăнни кирлĕ.

Сиенленес хăрушлăх пур лаптăксенчен 25,8 пин гектарĕ (е 88 проценчĕ) çине сăтăрçăсем тапăннă, 3,5 пин гектарĕ çине – чир-чĕр. Уйрăм сăтăрçăсенчен 17,7 пин гектар çине юман листовертки иленнĕ.

Сăмах май каласан, листоверткăран вăрмансене çăсем килес çул федераллă бюджет шучĕпе имçам сапма палăртаççĕ.

**Пĕлме интереслĕ**

## КĂМПА ТОПЛИВО ТУМА ПУЛĂШАТЬ

Кăмпаран дизель топливи тума май пуррине палăртнă нумаях пулмасть ученăйсем. Тĕпĕнмелле кăмпа углеводородсен 55 хутăшне синтезлама пултарать иккен. Çав кăмпа Патагонин çурçĕр пайĕнче ӳсекен эвкрифи ятлă йывăç вулли çинче ӳсет-мĕн иккен. Ученăйсем халь промышленность тĕллевĕллĕ углеводород синтезĕ валли кирлĕ кăмпари генсене тупса палăртасшăн.

## ÇИЛ-ТĂВĂЛ ШЕЛЛЕВСĔР

Çут çанталăкăн тепĕр пуламĕ этемшĕн те, çурт-йĕрпе ытти пуянлăхăшăн та хăрушсăр мар. Туллă вырăнта пурăнмастпăр та, çĕр чĕтреннине курмастпăр. Анчах урăхла пулăмсем те шеллевсĕр. Çу варринчех тем пысăкăш пăр çапса çуса чӳрече кантăкне ватни пирĕн патра та пулнăччĕ. Çил-тăвăл та хĕрхенмест.

Кăçалхи çу вĕçĕнче пулса иртнĕ çавăн пек пулăм йывăçсене те сиен кӳнĕ. Вăрман хуçалăхĕн ĕçченĕсем ун пек лаптăксене 418,93 гектар çинче палăртнă. «Шупашкар лесничестви» патшалăх учрежденийĕн территорийĕнче октябрь уйăхĕн вĕçĕ тĕлне ку ĕç вĕçленмен, малтанхи учет вăрман 330,5 гектар çинче шар курнине кăтартса панă. «Çĕмĕрле лесничествинче» 88,43 гектар сиенленнĕ.

**Страницăна В.ИВАНОВА хатĕрленĕ.**

# ПУÇЛĂХ КУБОКĔШĔН

***Çак уйăхăн 8-9-мĕшĕсенче Кӳкеçри «Улăп» спортпа сывлăх центрĕнче район пуçлăхĕн Кубокĕшĕн волейбол ăмăртăвĕ иртнĕ. Малтанхи кун кĕрешĕве арçынсем, вырсарни кун хĕрарăмсем тухнă.***

«Арçынсем хушшинче финалти ăмăртура Кӳкеç ял тăрăхĕн команди çĕнтерчĕ, иккĕмĕшĕнче – Кӳкеçри «РыбаLOVE» предприяти, виççĕмĕшĕнче – Шупашкарти «Нива» вĕрентӳпе курс комбиначĕн ушкăнĕ. Ял тăрăхĕсенчен Ишексем – иккĕмĕш, Çырмапуççем – виççĕмĕш. Хĕрарăмсенчен Кӳкеç ял тăрăхĕн команди мала тухрĕ, иккĕмĕшĕнче – Федераллă налук службин районсем хушшинчи 5-мĕш инспекцийĕ. Аслисемпе пĕрле Кӳкеçри лицейре вĕренекен хĕрсем хастар вылярĕç, виççĕмĕш вырăна тухма пултарчĕç. Ял тăрăхĕсенчен Ишек ял тăрăхĕнчи хĕрарăмсен ушкăнĕ иккĕмĕш вырăна çĕнсе илчĕ, Кăшавăшсен – виççĕмĕш», – пĕлтерчĕ район администрацийĕн социаллă аталану пайĕн пуçлăхĕн çумĕ С.М.Петров.

В.ТИТОВА.

## ПОСТАНОВЛЕНИЕ

*Главы Чебоксарского района Чувашской Республики*
*06 ноября № 1437 п.Кугеси*

### ОБ УСТАНОВЛЕНИИ ТАРИФА НА УСЛУГИ БАНИ, ОКАЗЫВАЕМЫЕ ОАО "АТЛАШЕВОЖИЛКОМУСЛУГА"

В соответствии с Федеральным законом от 06.10.2003 г. № 131-ФЗ "Об общих принципах организации местного самоуправления в Российской Федерации" и решением Собрания депутатов Чебоксарского района от 23.03.2007 г. № 09-06 "О Положении о порядке регулирования цен (тарифов) на товары и услуги, предоставляемые муниципальными предприятиями и учреждениями Чебоксарского района", п о с т а н о в л я ю:

1. Установить тариф на услуги бани, оказываемые открытым акционерным обществом "Атлашевожилкомуслуга" в размере 70 руб. без дополнительного предъявления НДС за одно посещение с продолжительностью помывки 1 час 30 мин.

2. Настоящее постановление вступает в силу с 10 ноября 2008 года, но не ранее чем с момента опубликования.

3. Опубликовать настоящее постановление в средствах массовой информации.

4. Контроль за исполнением настоящего постановления возложить на первого зам.главы – начальника управления экономики, имущественных и земельных отношений администрации Чебоксарского района А.Е. Егорову.


## ОБЬЯВЛЕНИЯ. ПĔЛТЕРӲСЕМ

☎ 2-13-80

**ПРОДАЮ КИРПИЧИ, СРЕЗКИ, ГОРБЫЛЬ. ДОСТАВКА. Т.: 89063821934, 89196611671, 89278454414.**

**ЛЮБЫЕ ПИЛОМАТЕРИАЛЫ: ХВОЯ, БЕРЕЗА, ОСИНА. ДОСКИ, БРУСЬЯ, ПОДТОВАРНИКИ, СРУБЫ. ДОСТАВКА.**
**Т.: 89033891400.**

**ПРОДАЮ** пиломатериалы, вагонка, подтоварник, шифер, цемент, профнастил оцинкованный. Доставка. Тел.: 25-5-43, 8 903 346 43 40.

**Продаю зерно с доставкой. Тел.: 2-12-07, 89279932736.**

**ПРОДАЮ** керамзитобетонные блоки 20х20х40, цемент. Тел.: 89050284130, 89033462293.


**На основании** распоряжения главы Чебоксарского района от 31.10.2008г. № 230-р администрацией Чебоксарского района проводится открытый аукцион по продаже права на заключение договоров аренды земельных участков, который состоится 17 декабря 2008 года в 10-00 часов в зале заседаний администрации Чебоксарского района по адресу: п.Кугеси, ул.Шоссейная, д.15.

Организатором аукциона выступает управление экономики, имущественных и земельных отношений администрации Чебоксарского района.

На аукцион выставлены следующие земельные участки:

| № лота | Месторасположение земельного участка | Целевое назначение | Площадь, га | Начальный размер годовой арендной платы земельного участка, руб. | Сумма задатка участника аукциона, руб. |
|---|---|---|---|---|---|
| 1. | с.Синьялы, ул.Центральная кадастровый номер 21:21:070101:261 (земли населенных пунктов) | строительство торгового павильона | 0,01 | 14300 | 2860 |
| 2. | д.Кивсерткасы, ул.Луговая кадастровый номер 21:21:170201:87 (земли населенных пунктов) | строительство магазина | 0,01 | 39400 | 7880 |

Ограничения, обременения отсутствуют.

Срок аренды земельных участков – 1 год.

Задаток установлен в размере 20% от начального размера годовой арендной платы земельного участка.

Шаг аукциона – 5% от начального размера арендной платы земельного участка.

Для участия в аукционе претенденты должны представить в срок до 11 декабря 2008 года следующие документы: заявку; платежный документ, подтверждающий внесение задатка; физические лица предъявляют копию документа, удостоверяющего личность; юридические лица дополнительно предоставляют нотариально заверенные копии учредительных документов.

Организатор аукциона имеет право отказаться от проведения аукциона не позднее, чем за 3 дня до его проведения.

Определение участников аукциона состоится 15 декабря 2008 года в администрации Чебоксарского района (кабинет № 2) в 10-00 часов.

Осмотр земельных участков на местности осуществляется 26 ноября 2008 года в 10-00 часов в следующем порядке: место сбора для выезда на место – по лоту № 1: с.Синьялы, ул.Центральная, д.34 (администрация Синьяльского сельского поселения); по лоту № 2: д.Н.Тренькасы, ул.Молодежная, д.8 (администрация Шинерпосинского сельского поселения); осмотр земельных участков производится визуально на местности с участием специалистов администрации Синьяльского, Шинерпосинского сельских поселений.

Задаток перечисляется на счет: ИНН 2116815609 КПП 211601001

Финансовый отдел администрации Чебоксарского района Чувашской Республики (Администрация Чебоксарского района Чувашской Республики л/с 05903160015) Чебоксарское ОСБ 4472 п.Кугеси

р/с 40302810875230100003 в Чувашском ОСБ 8613 г.Чебоксары

БИК 049706609 к/с 30101810300000000609.

Победителем аукциона признается участник аукциона, предложивший наибольший размер арендной платы.

Внесенный победителем аукциона задаток засчитывается в счет арендной платы земельного участка.

Величина размера годовой арендной платы, установленная в результате аукциона, остается неизменной на весь годовой срок действия договора аренды земельного участка.

Договор аренды земельного участка подлежит заключению в срок не позднее 5 дней со дня подписания протокола о результатах аукциона.

Покупатель производит оплату годовой арендной платы земельного участка ежемесячно до 10 числа, равными долями за каждый месяц вперед, со дня подписания договора аренды земельного участка.

Оплата расходов за публикацию информационного сообщения о проведении аукциона по продаже права на заключение договоров аренды земельных участков и об их результатах производится победителями аукциона в равных частях.

Прием заявок, оформление документов для участия на аукционе, ознакомление с проектом договора аренды земельного участка, основанными на результатах инженерных изысканий параметрами разрешенного использования объекта капитального строительства, с техническими условиями подключения такого объекта к сетям инженерно-технического обеспечения, а также с платой за подключение осуществляются с 12 ноября 2008 года по 11 декабря 2008 года до 17 часов в управлении экономики, имущественных и земельных отношений администрации Чебоксарского района по адресу: п.Кугеси, ул.Шоссейная, д.15, каб.№ 20. ***Телефон для справок: (8-835-40) 2-15-92.***

**Собственники** земельных долей сообщают о намерении выделиться из землепользования СХПК «Искра» Чебоксарского района ЧР: Петрова Л.Н. в счет доли 2,48 га пашни, Петров В.А. – 3,52 га пашни, Петрова В.В. – 3,53 га пашни в поле № 7. Возражения принимаются в течение месяца по адресу: ***п.Кугеси, ул.Шоссейная, д.9, территориальный отдел по Чебоксарскому району Управления Роснедвижимости по ЧР.***

**Собственник** земельной доли Пегасова Н.Е. сообщает о намерении выделиться из землепользования СХПК «Ишлейский» Чебоксарского района ЧР в счет доли 2,09 га пашни в поле № 4 рядом с д.Курак Чурачики. Возражения принимаются в течение месяца по адресу: ***п.Кугеси, ул. Шоссейная, д.9, территориальный отдел по Чебоксарскому району Управления Роснедвижимости по ЧР.***

**Собственники** земельных долей Афанасьев Н.В., Афанасьева Р.П., Краснова К.В., Краснов Н.В., Лыкова Р.Н., Морышкина Г.Н. сообщают о намерении выделиться из землепользования СХПК «Искра» Чебоксарского района ЧР в счет долей каждый по 2,48 га пашни в поле № 4к, рядом с СТФ. Возражения принимаются в течение месяца по адресу: ***п.Кугеси, ул.Шоссейная, д.9, территориальный отдел по Чебоксарскому району Управления Роснедвижимости по ЧР.***

**Собственники** земельных долей Зайцев В.И., Петровский Г.А., Петровская Э.С., Зайцев И.П., Краснова Ю.И., Ефимова С.И., Ефимов В.И. сообщают о намерении выделиться из землепользования ЗАО «Прогресс» Чебоксарского района ЧР в счет долей по 2,53 га пашни, 0,18 га пастбища; Зайцева Т.Г. – 7,59 га пашни, 0,54 га пастбища в поле № 7 второго полевого севооборота, кроме охранной зоны нефтепровода Альметьевск-Нижний Новгород. Возражения принимаются в течение месяца по адресу: ***п.Кугеси, ул.Шоссейная, д.9, территориальный отдел по Чебоксарскому району Управления Роснедвижимости по ЧР.***

**Предполагается** предоставление в аренду земельного участка площадью 0,1020 га с кадастровым номером 21:21:130105:78, расположенного по адресу: ЧР, Чебоксарский район, д.Большие Карачуры, ул.Октября (земли населенных пунктов), сроком на 11 месяцев для огородничества. Адрес: ***п.Кугеси, ул.Шоссейная, д.15, администрация Чебоксарского района. Тел.: 8(83540) 2-15-92.***

**Предполагается** предоставление в собственность (за плату) земельного участка площадью 0,0314 га с кадастровым номером 21:21:13 01 02:0077, расположенный по адресу: ЧР, Чебоксарский район, д.Большие Карачуры, ул.9-ый километр (земли населенных пунктов), для огородничества. Адрес: ***п.Кугеси, ул.Шоссейная, д.15, администрация Чебоксарского района. Тел.: 8(83540) 2-15-92.***

**Предполагается** предоставление в собственность (за плату) земельного участка площадью 0,0798 га с кадастровым номером 21:21:15 09 03:0379, расположенного по адресу: ЧР, Чебоксарский район, д.Вурманкасы (земли сельскохозяйственного назначения), для ведения личного подсобного хозяйства без права возведения на нем зданий и строений. Адрес: ***п.Кугеси, ул.Шоссейная, д.15, администрация Чебоксарского района. Тел.: 8(83540) 2-15-92.***

**Предполагается** предоставление в аренду земельного участка площадью 0,15 га, расположенного по адресу: ЧР, Чебоксарский район, д.Салабайкасы, ул.Полевая (земли населенных пунктов), сроком на 1 год для огородничества. Адрес: ***п.Кугеси, ул.Шоссейная, д.15, администрация Чебоксарского района. Тел.: 8(83540) 2-15-92.***

**Собственник** земельной доли Алексеев А.В. сообщает о намерении выделиться из землепользования СХПК-колхоза им.Ленина Чебоксарского района ЧР в счет долей площадью 26,73 га пашни в поле № 2 второго полевого севооборота, расположенного с северной стороны д.Байсубаково. Возражения принимаются в течение месяца по адресу: ***п.Кугеси, ул.Шоссейная, д.15, администрация Чебоксарского района. Тел.: 8(83540) 2-15-92.***

**Поправка**. В газете «Тăван ен» №№ 41-42 от 12.04.2008 г. в объявлении о выделении земельной доли из землепользования СХПК «Атăл» вместо фамилии «Чигаркин С.А.» следует читать «Федюшкина Г.В» и далее по тексту.

**Поправка**. В газете «Тăван ен» № 46 от 23.04.2008 г. в объявлении о выделении земельных долей вместо фамилий «Мешкова А.Ф. и Олаева Л.М. каждый по 2,09 га» следует читать «Яруткин О.В.- 4,18 га» и далее по тексту.

**Поправка**. В газете «Тăван ен» № 142 от 12.12.2007 г. в объявлении о выделении земельных долей колхоза «1-ое Мая» вместо «Степанов М.Б.» следует читать «Богданов Ю.В.» и далее по тексту.

**Поправка**. В газете «Тăван ен» №№ 115-116 от 11.10.2008 г. в объявлении о выделении земельных долей СХПК «Атăл» для Савельева Г.Е. и Савельевой В.Н. вместо слов «в поле №5 третьего полевого севооборота, рабочий участок №1 западнее с.Анат-Киняры» следует читать «в поле №6 первого полевого севооборота, рабочий участок №1 западнее д.Ойкасы» и далее по тексту.


ТĂВАН ЕН
(“КРАЙ РОДНОЙ”)
Чебоксарская районная газета

Учредители:
Министерство культуры, по делам национальностей, информационной политики и архивного дела Чувашской Республики,
РГУ “ Редакция Чебоксарской районной газеты “Тăван Ен”,

Газета зарегистрирована в Управлении Федеральной службы по надзору за соблюдением законодательства в сфере массовых коммуникаций и охране культурного наследия по Приволжскому федеральному округу 8 ноября 2005г. ПИ №ФС 18-2477

429500, Чебоксарский район, пос. Кугеси, ул. Шоссейная, 13.

Газета выходит на чувашском языке, с периодической подачей страниц на русском, два раза в неделю - по средам и субботам.

Гл. редактор В.Т.СОРОКИН

Дежурный по номеру: В.Т.ИВАНОВА.

Рукописи не возвращаются и не рецензируются. Опубликованные мнения не всегда совпадают с точкой зрения редакции. За достоверность материалов ответственность несут авторы. За содержание рекламы ответственность несет рекламодатель.

Гл. редактор - 2-12-61, отдел сельского хозяйства, отдел писем ,отдел общественно-политической жизни - 2-21-88, бухгалтерия - 2-13-80, 2-12-59. E-mail: gazeta@chebs.cap.ru. Сайт www.tavan-en.cap.ru.

Номер отпечатан в ГУП «ИПК «Чувашия». Тел.21-00-23.

Печать офсетная. Объем 1,0 печ. лист.
Номер подписан в печать: 11.11.2008 г. в 16 час. 00 мин.
Тираж 2250. Заказ №
Индекс газеты - 54820.